# Вăçça Анисси

100



*Малтанхи чăваш хĕрарăм-сăвăçăн пултарулăхĕ*

«Хыпар» кĕнеки • 5 № • Шупашкар, 1993, кăрлач, 26



# Малтанхи сăвă

## Ваççа Анисçине асăнса

Шкулти Сергей Семенович Сорокин
«Хыпар» хаçат, ак, илнĕ Хусантан.
«Ял-йыш валли каçпа вулар-ха иккĕн,—
Калать вăл Итеçе, — сан патăнта».
Итеç Ваççи хăй хăйă хатĕрленĕ, —
Краççин пачах та халĕ çук ялта.
Хаçат вуланине ял-йыш тимленĕ,
Итесĕн хĕрĕ Анисçе — малта.
«Аçта пăхсан та — терт-нуша та хурлăх.
Сывлăш çавăраймасть мĕскĕн хресчен.
Ачи-пачи ун халĕ — пĕтĕм пурлăх.
Çапла нуша тÿсес-ха хăçанччен?..»
Шăв çĕмĕрет-çке лăпланми çак шухăш
Вунвиççĕре кăна ачан пуçне.
Тарăхнипе, çут куççульпеле хутăш,
Тар перчисем юхаççĕ пит çине.
Шухăшĕсем капланнă, пуçа килнĕ,
Пĕлтернĕ чĕрене мĕн тулнине.
Хут-кăранташ хăй аллине хĕр илнĕ,
Самах хыççăн самах тек тĕрленет.
Çапла пĕр каçхине майпен çуралнă
Пулас сыравçан малтанхи сăвви.
Вăл, «Хыпарта» тухсан, кайран саланнă
Чĕмпĕрьентен Çĕпĕр çĕрне çити.
...Каллех Сорокинпа Итеç Ваççи пек
Ял-йыш валли вулаççĕ «Хыпара».
Унта — Тăваньялсем Сергей сăвви те
Итеç хĕрĕн хайлавĕ пур — «Ялта».

Яков РОГАЧЕВ.

Ульяновск облаçĕ,

Димитровград хули.

# Чĕкеç

*Ваççа Анисçине*

Ялта шăпах. Пĕтмен-ши пурнăç?..
Вĕрмен пĕр йытă та пулин, —
Выçăпала аптранă пулнă,
Ачи хÿхленĕ тахăшин...

Кĕтмен çĕртен çÿле çĕкленнĕ
Пĕртен-пĕр чĕвĕлти чĕкеç.
Çын инкекне курса эрленнĕ,
Пĕччен ял çийĕн вĕçнĕ çеç.

Пĕрре çĕрле вăл асăрханă
Çич тÿпери çут çăлтăра.
Яла малашлăх хыпарланăн
Çав çăлтăр çиçнĕ йăлтăрах!

Анчах вăл сÿннĕ хăвăрт. Çăлтăр
Çын кĕтнĕ пек ялкăшайман.
Тÿре-шарашăн йăлт тĕп пултăр, —
Ана сĕм-тĕттĕмре аван.

Чĕкеç çил каснă. Вăл — илемлĕ.
Вăл шаннă çăлтăр тухасса.
Пĕрре Анаткаса иленнĕ,
Тепре çĕкленнĕ Тукаса.

Кĕтни чăнах та çитрĕ. Çăлтăр
Каллех çĕкленчĕ тÿпене.
Сÿнми çунать вăл йăлтăр-йăлтăр,
Телей кÿрсе Чăвашьене.

Анатолий ЮМАН.

# Россия слушала Ваш стих

*А. В. Княгининой*

Издревле добрая примета:
Тем, кто рожден под Рождество,
Всю жизнь светить им будет ЛЕТО,
Их будни — станут торжеством.

Тому, кто верит в святость эту —
Доступней радость обрести;
С той доброй, милою приметой
Спорится труд, легко идти...

Аппа Аниса, это — сказка,
Веков минувших — только миф...
Ваш путь — не в розовых был красках:
Рвались сквозь темень в светлый мир

«Рубеж был взят!» — и Вы сумели
Невероятное постичь:
К сердцам чуваш слова летели,
Россия слушала Ваш стих...

Якуб МУЛЯРЧИК.
1974. Димитровград.

# Чудо-камень

*А. В. Княгининой*

Родился в недрах чудо-камень,
У Волги-матушки реки.
И засветились его грани
Цветами радужной дуги.

И этот камень благородный
Точил Чувашии народ,
И засверкал поэт народный.
Ее творенье не умрет.
Оно запомнится веками,
В народе долго будет жить.
Ее чувашскими стихами
И внуки будут говорить.

Александр ДЕМИДОВ.

# УМСĂМАХ

ТĂВАН литературăн XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи çитĕнĕвĕсем çинчен калаçнă чухне тĕпчевçĕсем Ваççа Анисçи ятне асăнмасăр иртмеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ унăн пултарулăхне, вăтам тата аслă шкулсенче вĕренеççĕ, пичетре чи малтан палăрнă чăваш хĕрарăм-сăвăçĕн сăввисене вĕренÿ кĕнекисене кĕртнĕ. Апла пулин те, поэтессăн пултарулăхне туллин кăтартакан тĕпчевсем тухаймарĕç. Вунă çул ытла каяллах Ваççа Анисçин тăван ялĕпе ытти вырăнти çынсем сăвăç çырнисене пухса кăларма ыйтса тархасланăччĕ, ала пусса темиçе çĕре те çыру янăччĕ. Шел, ку тĕлĕшпе Чăваш кĕнеке издательстви те, Çыравçăсен Пĕрлешĕвĕ те çине тăрса тимлеми пулмарĕ.

Вĕсенчен шăвах çакăн пек сăмах илтме тиврĕ: «Ваççа Анисçи çырнисем сахал, вĕсем паянхи вулакана тивĕçтерейменççĕ, пысăк тиражпа кăлармалăх çук». Хамăр пуянлăхăмăр хакне-пĕлтерĕшне туйса илменни çамрăк ăрăва вĕрентес ĕçе те хавшатать, ăс-халăмăр пурлăхне те чухăнлатса кăтартать. Чăннипех те мухтава тивĕçлĕ сăвăçăмăр çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май асăнна çитменлĕхе саплаштарас тесе ятарласа «Хыпар» кĕнеки кăларатпăр.

Ку кăларăма сăвăç çырнисене пĕтĕмпех кĕртме май килмерĕ. Унăн асăнлĕвĕсене кĕскетсе пама лекрĕ. Кунта сăвăçăн пултарулăхне лайăхрах ăнланма пулăшакан сыпăксене çеç пичетлетпĕр. Ăна автор хăй 1969 ç. çырса хăварнă алçыру тăрăх хатĕрленĕ. «Емĕт çитрĕ» кĕнекере ăна Юхма Мишши 1971 çулта çыраса илнĕ тесе кăтартнă. Вăл текста тĕл-тĕл лайăх редакциленĕ, анчах унта шухăша пăтраштарнисем те, вырăнсăр кĕскетнисем те пур. «Çутă çăлтăр хăпарчĕ» кĕнекери сăвăсене редакциленĕ чухне Ваççа Анисçи çырнисене (1907 çулхи «Ялта» сăвва та) улăштарса пичетленĕ, тĕл-тĕл çĕнĕ çаврасем хушса та çырнă. Кунта вĕсене тÿрлетсе, автор текстне упраса пичетлетпĕр. Ку кĕнекене поэтессăн халиччен пичетре пачах та пулман сăввисене те кĕртрĕмĕр. Чылай вăхăт хушши Федор Николаев çырнă тесе шутлакан «Хура халăх» поэма (ăна «Хыпар» хаçатра 1907 ç. авторне кăтартмасăр пичетленĕ) Ваççа Анисçи хайлавĕ пулни иккĕлентермест ĕнтĕ. Çапла вара малтанхи хĕрарăм сăвăçăн пултарулăхĕ туллирех те сумлăрах курăнать. Паллă çынсем ăна хакласа каланисем Ваççа Анисçине чăннипех ырласа йышăнма пулăшĕç.

Геннадий ЮМАРТ.


ВАÇÇА АНИÇÇИ. Малтанхи чăваш хĕрарăм-сăвăçăн пултарулăхĕ. «Хыпар» кĕнеки. Шупашкар, 1993, кăрлач, 26.

Пухса хатĕрлÿ: Геннадий ЮМАРТ, Валентина АКĂШПИ.

Тĕп редактор: Алексей ЛЕОНТЬЕВ.

Редактор: Илле ИВАНОВ.

Художник Иван ВЛАДИМИРОВ.

Тираж: 74094.


● Кĕнекен хуплашкинче Ваççа Анисçи хĕрĕпе тата шăллĕпе пĕрле



Васса Анисси.

*Вaçça Аниççи*

# ХУРА ХАЛĂХ

Çуркунне Çутă кăвак
Пĕлĕтрен хĕвел хĕртет;
Çуттипе шурă юра
Чуп туса ирĕлтерет.
Пур енчен те çырмасем
Шавласа-шăнкартатса,
Выляса-йăлтăртатса,
Хĕвеле хирĕç кулса,
Чупаççĕ сиккипеле
Аната, амĕш патне:
Амăшне — хулăн пăра
Çĕмĕрсе-таткаласа
Хĕллехи тыткăнлăхран
Хăтăлмашкăн пулăшма,
Амĕшпе инçе çула
Шавласа та кĕрлесе
Харăс тапранса кайнă,
Васканă пек туйăнать.
Пур тĕрлĕ вĕçен кайăк
Çуркуннешĕн савăнать.
Çерçисем хĕвел питне
Пуханнă та пĕр-пĕрне,
Пĕрмаях чĕвĕлтетсе,
Хăйсенĕн савăнăçне
Каласа кăтартаççĕ.
Тăрри те, хирте, çÿлтен
Тĕнчери çуркуннехи
Мĕнпур илеме курса,
Ытараймасăр, ăна
Мухтаса юрă юрлать.
Эс анчах, хура халăх,
Тĕнчери пур чĕрĕ чун
Савăннă çак вăхăтра
Тамăкра пек пурăнан!
Пăрахăç тăлăх ача,
Ачасем вылянă чух,
Пăрăнса аяккалла,
Хурланса йĕрсе тăрать;
Эс те çав ача пекех.
Икĕ куç сана тĕнчен
Илемне курма паман,
Куççулли тăкма панă;
Чĕрÿне савăнма мар,
Хуйхăрса çунма панă.
Савăнас шухăш сан çук,
Шухăшу сан пĕрмаях
Пĕр татăк çăкăр çинче.
Тăсăлса ÿкичченех
Ĕçлессе ху ĕçлетĕн.
Çапах та тирпейлĕрех
Кил-çурт та тăваймастăн!
Тутă та пулаймастăн!
Улăмпа витнĕ, путнă,
Ишĕлес пек туйăннă,
Хăш куçне кипке карнă
Виç пĕчĕк чÿречеллĕ
Аслаçу лартнă пÿртĕ[1]
Утмăлти карчăк пекех.
Пÿртĕ алăкне уçса,
Çил-тăвăл, йыт-качăка
Кĕресрен анчах тунă
Хÿш пек пăлтăрна курап.
Çуклă-пурлă япала,
Пукравччен тырă хума
Мунча пек кĕлечĕ пур.
Малалла тайлăк ампар
Витĕр курăнса ларать;
Ун айне пĕр кĕтессе
Кăрманлă çуна лартнă.
Кĕтессе, ампар çумне,
Вĕрлĕк хапхаллă çатан,
Пĕчĕккĕ, лутра карта
Аслăкла витсе тунă.
Карта хапхи патĕнче,
Хĕртекен хĕвел çинче
Халь тÿнсс пек лашупа
Хĕç пекех юлнă ĕнÿ
Улпутран сутăн илнĕ
Çинĕ улăм кăшлаççĕ.
Картишне ытти енчен
Çил тайнă çатан пÿлнĕ.
Çатану урлă пăхать:
Пахчăвăн леш вĕçĕнче
Анкарти пушă выртать,
Пĕр йĕтем юпи анчах,
Тăлăх пек, тайлăк, ларать.
Алăксенче пĕшкĕнсе,
Сан пÿртне курма кĕреп.
Сывлама та çук пăча,
Хăш куçне кипке карнă
Виç çĕмрĕк чÿречерен
Пĕринчен хĕвел çутти
Урайне кĕрсе ÿкет;
Хĕвелĕн çав çуттинче
Явăнса тусан çÿрет.
Урайне пылчăк хытнă,
Хăмисен хушшисене
Тĕлĕпе саплăк çапнă.
Кăмаки мăкăрăлнă.
Икĕ сак кĕтессинче
Пĕр ури хуçăк сĕтел,
Пĕчĕккĕ кивĕ тенкел.
Сак çине, пĕр кĕтессе,
Çĕтĕк-çурăксем çине
Пăрахнă икĕ çÿхе,
Хуралнă питлĕ минтер.
Пăтаран алăк патне
Таткаланнă пĕр кĕрĕк,
Ик сăкман, çурăк чаппан,
Кăларса ывăтмалли
Пĕр çĕлĕк çакса хунă.
Эй, асап курман çынсем!
Саккăн[2] пек пÿртре эсир
Выльăх-чăхх(ă)ра та усрамăр.
Халăха анчах эсир,
Выльăхран та кая хурса,
Витĕртен начар пÿрте
Питĕрсе, хупса лартрăр!..
Кăмака çинче карчăк
Сĕтĕк-çурăк айĕнче
Йăнăшса чирпе выртать,
Кил хуçийĕ тĕпелте
Çăпата туса ларать.
Улача кĕпе-йĕмпе,
Уринче çĕтĕк тăла.
Чăркуççийĕ хушшине
Хĕстернĕ çăпатине;
Малалла пуçне чикнĕ.
Хĕрĕхе те хăй çитмен,
Çÿç-сухалĕ шуралать,
Пит çăмартисем путнă,
Сăмси çех тăрса юлнă.
Курпунĕ пысăк тухнă;
Шăммисем саланасран
Тирĕ анчах тытса тăрать.
Сывлăшне çавраймасăр
Час-часах хăй ÿсĕрет.
Ўсĕрсе çăра сурчăк
Урайне сурса таптать.
Кĕтесре, алăк панче,
Кил хуçийĕн арăмĕ
Шурă пир тĕртсе ларать.
Пуçĕнче тĕссĕр явлăк[3],
Çийĕнче çĕтĕк кĕпе;
Пĕркеленнĕ, шăмăллă,
Шурă (кăкăрĕ умне)[4]
Йывăр ĕç тарĕ тухнă.
Ун панче, хуп сăпкара,
Кипкесенĕн айĕнче
Кăкăрти ачи сывлать.
Тураšсен кĕтессинче,
Ашшĕнчен-амăшĕнчен
Аякка уйăрăлса,
Икĕ пÿрнине хыпса,
Пиллĕкри хĕр, çăкăршăн
Тин йĕме чарăннăскер,
Сарăрах çÿç хушшинчен
Типеймен куççуль витĕр
Ик хĕрлĕ куçĕпеле
Хуйхăрса пăхса тăрать.
Питĕнче тумлам юн çук,
Тутисем кăвакарнă.
Мăйĕнче шăнăр паллă,
Хулă пек алли-ури;
Пĕчĕкçĕ тăлăппÿне[5]
Çĕтĕлнĕ кĕпе çакнă.
Çил вĕрмен, хĕвел курман
Тин шăтнă сарă чечек
Сарăлма пуçличченех
Çав хĕр пек типме пуçлать!
Хĕр, выçça чăтаймасăр,
Кăшт тăрсан, «çăкăр» тесе
Хурланса йĕрсе ячĕ...
Хĕр енне пуçне пăрса,
Шаккаса шĕшлипеле,
Кăшкăрса ашшĕ ячĕ:
«Ан ула, выçă кашкăр!
Калана пĕрре сана,
Кăнтăрла çийĕн, тесе!
Ак илĕп те чăпăркка,
Кастарăп кутна усса!»
Хĕр йĕме чарăнаймасть,
Хĕр тата хытă йĕрет...
Калăплă çăпатине
Пăрахрĕ те хĕр ашшĕ
Урисем çине тăчĕ.
«Чарăнмастăн-и-ха эс?!»
Терĕ те чăпăрккине
Пăтаран ярса илчĕ.
Чăпăрккă аврипеле
Шаккаса, ача патне
Çывхарса тата хытă
Пуçларĕ кăшкăрма:
«Чарăн!.. Чарăн!.., унсăрăн
Пайсăрхин пек кастарăп!..»

---

[1] Пÿртÿ.
[2] Çакăн.
[3] Тутăр.
[4] «Хыпарта» ку тĕлте пăнчăсем çеç лартнă.

Кăмака ҫинчи карчăк
Ҫак шава чăтаймарĕ,
«Еррипе!.. пуҫ ҫурăлать!.,
Ах!.. часрах вилеесчĕ!..
Эй асап!..» терĕ. Хай хĕр
Ашшĕнчен хăранипе
Чарăнчĕ ирĕксĕрех,
Ик ҫинҫе пӳрнисене
Ҫаварне тагах хыпрĕ,
Тăлăх пек кĕтессине
Хытăрах хăй сыпсанчĕ,
Тытăнчĕ кăнтарлахи
Апата чунтан кĕтме!..
Хĕр ашшĕ чăпăркkине
Чĕнмесĕр ҫакса хучĕ,
Ахлатса ҫăпатине
Еррипе ярса илчĕ,
Пĕр сăмах та чĕнмесĕр
Тытăнчĕ каллах тирме...
Сасăпа кăкăр ачи
Вăранса йĕрсе ячĕ;
Амăшĕ сиксе тăчĕ,
Сăпкана ярса тытса,
Хăй хĕрне вăрҫа-вăрҫа
Сулламашкăн тытăнчĕ.
«Ня... ня... ня... Ҫывăракан
Ачана, мур, вăратрĕ!
Чирлесе вилсем часрах!
Пурĕпĕр выҫă вилĕн!
Хă(в)на та канлĕ пулĕ,
Ытлашши пыр та чакĕ!..
Ултăшĕ ҫапла выҫах
Кăшкăрса, йĕрсе вилчĕҫ!..»
Ку тĕлте хĕр амăшĕ
Ачине сулла-сулла
Тытăнчĕ пĕр аллипе
Ик куҫне шăлкалама...
Выҫă хĕр куҫ айĕнчен,
Кĕтесрен тапранмасăр,
Ик ҫинҫе пӳрнисене
Ҫавартан кăлармасăр,
Йĕрекен амăш ҫине
Тытăнчĕ пĕр май пăхма.
Кил хуҫийĕ вăраммăн
Сывласа ячĕ; пуҫне
Ҫĕклемесĕр хăвăртрах
Шак-шак! тытăнчĕ тирме...
Кăкăрти ача йĕрет...
Амăшĕ куҫĕсене
Чарăнчĕ шăлкалама,
«Ня... ня... ня... Ҫăкăр!.. ҫăкăр!..
Халĕ те кун каҫиччен
Виҫ-тăвата хут ҫиен!
Ав, эпир аҫупала
Ирпе каҫ анчах тутă!..
Ня... ня... ня... Халĕ те
Бырмалла пачăшкаран
Илнĕ вунă пăт тырра
Час ҫисе пĕтертĕмĕр!
Сĕтелти ҫур ҫăкăртан
Ытлашши пĕрчĕ те ҫук...
Ня... ня... ня... Ку мĕн тата
Сулласан та ҫывăрмасть?!
Ĕҫлеме вăхăт памасть!
Ҫак пире пĕтерсессĕн,
Ҫын валли тĕртесшĕнччĕ...
Кил, эппин, кăшт ҫитерем!
Пĕр вăрансассăн вара
Ҫывăрттарасси асап!..
Ай-уй!.. мĕскĕнĕн епле
Ҫиесси хытă килнĕ!
Пĕчĕкҫĕ аллисемпе
Чĕччĕме ярса тытрĕ.
Васкаса, чĕтĕресе
Ҫăварне часрах хыпрĕ!..
Эх, ку ҫук пурăнăҫĕ!
Ҫак вăрăм кун хушшинче
Ҫирĕм хут ĕмет пулĕ,
Ҫапах та таранаймасть!..
Хăр-типĕ ҫăкăр ҫисе,
Кăкăрăм типсе ларчĕ...
Парăттăм ёмчĕк[6] туса —
Ҫук укҫа сахăр илме!..»
Арăмин сăмахĕсем
Кил хуҫийĕн чĕрине
Ҫĕҫĕ пек хырнă пулас:
Чăтаймасăр вăраммăн
Сывласа тата ярса,
Арăмне часрах пӳлчĕ:
«Мĕн тума пултарăпăр?!
Ҫĕр сахал: ҫук тырруна
Куланай пама сутан,
Нумайрах акас тесен,
Ҫĕр илме пĕр пус та ҫук...
Ĕҫлесе укҫа тăвас —
Ĕҫ ăҫтан тупма ҫӳрен?
Кĕркунне, ав, хулана
Ĕҫлеме кайрăмăр та,
Каялла таврăнтăмăр —
Вунă пус ахаль пĕтрĕ...
Тырă турттарма пĕри
Тытасшăнччĕ те... лашу
Хă(й)не те чух сĕтĕрет.
Лашупа, турттарма мар,
Тыррăна[7] та акаймăн...
Пуяна, ак, ҫăпата
Ик мăшăр кунне тăвап,
Мăшăрне икĕ пуса —
Ҫаккăн пек ĕҫ хăш чухне
Тупăнать... анчах унпа
Нушăна[8] тӳрлетеймĕн....
Салтакран Петĕр килсен,
Сывлăш ҫавăрăпăр-и?..
Ах-ах-ах!.. чăтас пулать:
Ҫак асапсене курма
Турă ҫырнă-тăр пире!»
Эй, мĕскĕн хура халăх!
Ҫывăрмасăр, тар сапса
Ӳстернĕ тыррупала,
Шаммăна-шакка ватса
Кăшт тупнă укҫупала
Ыттисем пурăнаҫҫĕ,
Ху выҫă ларнă чухне
Ҫурт тулли хăна пухса
Ĕҫкĕ-ҫикĕ тăваҫҫĕ,
Тĕттĕмрен кăлармаҫҫĕ.
Эс вара: «Асап курма
Турă хушнă-тăр», — тетĕн.
Ҫынпала ҫынна турă
Нихăҫан та уйăрман:
Пурне те тăмран тунă,
Пĕр пек чун вĕрсе кĕртнĕ:
Ҫак ҫĕре пултарсассăн,
Пур ҫын аллине панă;
Пур ҫынна та тарласа
Ĕҫлесе ҫиме хушнă.
Халĕ те вăл ҫумăрне,
Ҫак хĕвелĕн ҫуттине
Пуянни-ҫукки ҫине,
Пĕр тиркемесĕр ярать.
Ҫук, мĕскĕн хура халăх,
Турă мар ҫынна тиркет,
Эс асаплă пурăнни
Ҫынсенченех вăл килет!

1907

---

[5] Тăлппăвне.
[6] Ёмкĕч.
[7] Тырруна.
[8] Нушуна.

# ИРТСЕ КАЙНĂ КУН-ҪУЛĂМ

## *Анатри Тимĕрҫен*

МАНАН тăван ялăм — Анатри Тимĕрҫен. Вăл Ульяновск облаҫĕнче, Чăнлă районĕнче, Ульяновскран аллă ҫухрăмри Тимĕрҫен ятлă пĕчĕкҫĕ ҫырма хĕрринче вырнаҫнă. Ку шыв хĕрринче тăвата ял вĕҫе-вĕҫĕн тенĕ пекех: Ҫӳлти Тимĕрҫен, Вăта Тимĕрҫен, Анатри Тимĕрҫен, Ҫĕнĕ Тимĕрҫен.

Ҫак ĕмĕр пуҫламăшĕнче Анатри Тимĕрҫенте пысăк, аван ҫуртсем пуянтарах ҫынсен кăначчĕ. Лутра, пĕчĕкҫĕ улăм витнĕ е йывăҫ, е тăм пӳртсенче пусмăрлăха тӳссе, хĕн-хур курса пурăннă тĕттĕм чăвашсем. Пирĕн ялта шкул ҫукчĕ. Пысăкрах лавка та Кирпĕч Эрхипĕн кăначчĕ. Аслă урамра хупах (эрех лавки) пурччĕ. Ана хысна лартнă. Пĕр шыв арманĕ тата ҫеремре ҫил арманĕсем пурччĕ. Вĕсем пуянтарах ҫынсен пулнă. Каярахпа Анатьялта пасар уҫрĕҫ. Таврари ялсенчен ҫынсем пасара мĕн те пулин туянма е сутма пыратчĕҫ. Кӳршĕ ялсенчи лавкаҫсем те тухатчĕҫ. Ушкăнĕ-ушкăнĕпе хĕрсемпе каччăсем ҫын курса, хăйсене кăтартса ҫӳретчĕҫ. Ват мучисем ҫăпата, хĕрарăмсем чăкăт, ҫăмарта, ҫу сутатчĕҫ. Хулаҫырма лавкаҫĕсем тĕрлĕ таварпа суту-илӳ тăватчĕҫ.

## *Атте—Иттеҫ Ваҫҫи*

АНАТРИ Тимĕрҫенте, Хурамал каснинче ĕлĕк икĕ пĕр тăван пурăннă. Пĕри — Иттеҫ, тепри — Паттеҫ. Ун чухне Тимĕрҫенсем киремете пуҫ ҫапнă, уйчук тунă. Пурăна киле чăвашсене тĕне кĕртнĕ, Иттеҫе Макҫăм, Паттеҫе Прак ят панă.

Иттеҫĕн икĕ ывăл пулнă: пĕри Сергей, тепри Василий. Кĕҫĕннине Ваҫҫа тесе чĕннĕ. Ку — ман атте. Ялти ҫынсем ăна Иттеҫ Ваҫҫи тесе чĕннĕ. Хамăр ялта шкул пулманнипе пирĕн атте Вăта Тимĕрҫен шкулне вĕренме ҫӳренĕ. Вулама пит юратнă.

Ун чухне чăвашла илемлĕ литература кĕнекисем пулман. Пур-ҫук кĕнекесенче ҫветтуйсен пурнăҫĕ ҫинчен кăна ҫырса кăтартнă. Атте ҫав кĕнекесене вула-вула турра ĕненекен пулса кайнă. Ҫветтуйсем пек турра юрăхлă пулас тесе тӳшекне сутса янă, япалисене ыйткалакансене валеҫме тытăннă. Ҫăварнире ҫынсем уяв тунине курса ҫылăха кĕрес мар тесе чӳречисене карса лартнă. Чиркĕве юрлама ҫӳренĕ. Пупсем хушнă тăрăх вăл чиркӳре хор йĕркеленĕ. Тимĕрҫен хорĕ

ҫенсем Ваҫҫа Аниҫҫи» тесе ларт, — терӗ. Эпӗ ун сӑмахне итлерӗм. Ку сӑвва «Хыпар» хаҫатӑн 12-мӗш номерне кӗртнӗ. Аяла «Т. В А.» тесе лартнӑ.

Вӑл вӑхӑтра «Хыпар» хаҫатӑн редакторӗ В. И. Ивановччӗ, Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче хама вӗрентнӗскер. Василий Ивановичӑн кун-ҫулӗ кунта та ӑнмарӗ: патша тарҫисем чӑвашсен пӗртен-пӗр хаҫатне хупрӗҫ, типографине салатрӗҫ. «Хыпара» хупнӑ хыҫҫӑн сӑвӑсене ниҫта та пичетлеме май ҫук пулса тӑчӗ.

Пӗррехинче С. С. Сорокин пирӗн пата алӑпа ҫырнӑ журнал илсе пычӗ. Журнал ячӗ «Хайхи». Пире ку пит килӗшрӗ.

— Татах та кӑлармалла ку япалана, — теҫҫӗ аттепе кӳршӗ ҫыннисем.

Ҫавӑнтан кайран эпӗ С. Сорокина «Хайхи» журнала ҫырма пулӑшма тытӑнтӑм. Унта хам ҫырнӑ сӑвӑсемпе калавсене те кӗртеттӗм. «Кам наян, кам ӗҫчен», «Ан хӑра хура халӑх» т. ыт. те. Эпӗ «Хайхи» журнала алӑпа пӗр экземпляр ҫырса параттӑм, С. Сорокин ӑна нумайлататчӗ. Вӑл мӗнле нумайлатнине эпӗ пӗлместӗп. Эпӗ ача пулнӑ, мана пурне те шанман, калама хӑранӑ пуль. Журналӑн кашни экземплярӗ эпӗ ҫырнӑ пекех пулатчӗ. Ҫав журнал ҫине эпӗ хамӑн «Аккули», «Кирук» тата ытти калавсене те кӗртнӗччӗ.

Журналӑн хуплашки ҫине ҫапла ҫырнӑччӗ:

| | |
|---|---|
| Редакци пуҫра | Кантурӗ кӗсъере |

## Хайхи

Вулакансем, тӑванӑмсем,
Вуласса тӗплӗ вулӑр.
Йанӑш сӑмаха каҫарӑр,
Ҫитменнине ҫитерӗр,
Ытлашшине ҫук тӑвӑр,
Тӗрӗссине хыт тӑнлӑр!

Журналӑн пӗр номерӗ ҫинче Тӑваньялсем Сергейӑн «Христос ҫӗр ҫинче» ятлӑ калавӗ тухнӑччӗ. Тӗрмере ларакан пӑлхавҫӑ ҫын куҫне ун патне ҫав тери йывӑр вӑхӑтра Христос пынӑ пек курӑнать.

— Ан кулян, — тет вӑл ӑна. — Акӑ часах телейлӗ пурнӑҫ килӗ. Пуянсем, пусмӑрҫӑсем пулмӗҫ. Пурте пӗр тан, ырӑ курса пурӑнма тытӑнӗҫ. Ун чухне вара сан пек ирӗклӗхшӗн асапланакан ҫынсен ячӗ ҫутӑ ҫӑлтӑр пек пулса тӑрӗ.

Ҫак калавра Тӑваньялсем Сергей Христоса чӑн-чӑн революционер пек кӑтартнӑччӗ.

Анчах ҫакӑн пек журнал кӑларса тӑрасси вӑл вӑхӑтра хӑрушӑ ӗҫ пулнӑ. Эпӗ хам айваннипе ӑна ӑнлансах та кайман.

Ҫуркунне С. Сорокина Хусана йышӑрттарчӗҫ. Вӑл унта кайнӑ чухне ялти чӑвашсем пек сӑхманпа, тӗп хунӑ ҫӑматӑпа кайрӗ. Ҫӳҫне ҫаврака кастарчӗ. Сӑхманӗ, ҫӗлӗкӗ те, кӗпи-йӗмӗ те — пурте кивӗ — чӑн-чӑн тӗттӗм чӑваш каччи пекех тумланнӑччӗ. Никам та: «Ку ҫын С. Сорокин, Тимӗрҫен учителӗ», — тесе калас ҫук.

— Палласан ҫул ҫинчех тытса хупӗҫ, сыв пулӑр, тен, урӑхран кураймӑпӑр та пӗр-пӗрне. — тесе тухса кайрӗ вӑл килӗнчен.

Хусантан таврӑнсан мӗн пур пек алҫырӑвӗсене пурне те вута пӑрахса ҫунтарчӗ. «Хайхи» журналӑн пӗр номерӗ те юлмарӗ. 1908 ҫ. кӗркунне Аслӑ Аксӑва куҫса кайрӗ. 1910—1911 ҫулсенче вӑл Чӑваш Паснапуҫӗнче ӗҫлерӗ. Ватӑлсан хӑйсен ялне куҫнӑ, ҫурт лартнӑ. Вара виличченех ҫавӑнта пурӑннӑ.

## Мелекесре

1963 ҫ. пӗр кӗтмен ҫӗртен Хусанти университетра ӗҫлекен К. К. Петров журналист ман патӑма ҫыру ячӗ. Вӑл ман автобиографипе интересленет. «Хыпар» хаҫат тухса тӑнӑ вӑхӑтри пурнӑҫа ыйтса пӗлесшӗн. Ун ҫырӑвӗсене ответлеме манӑн тахҫан иртсе кайнӑ ача чухнехи пурнӑҫа аса илмелле пулчӗ.

Вӑл ман патӑма ҫыру ҫырассин сӑлтавӗ ҫапла пулнӑ. Ман тӑван шӑллӑм, Свердловскра пурӑнакан Итэсь Виктор Васильевич Хусана пынӑ. Вӑл инженер-геолог пулнӑскер халӗ пенсипе пурӑнать. Вӑл Ульяновск рабфакӗнче Афанасий Лисков журналистпа пӗрле вӗреннӗ. Виктор Итэсь Хусанта Лисков патӗнче пулнӑ. Хула курса ҫӳренӗ чух вӗсем пӗр журнал редакцийӗнче К. Петрова тӗл пулнӑ. Вирӗ чӑваш калаҫнӑ май авалхи пурнӑҫа, Хусанти чӑвашсен пирвайхи хаҫачӗ «Хыпар» тухса тănине аса илнӗ.

— «Хыпар» хаҫатра сӑвӑ-калав пичетленӗ чылай авторсен пурнӑҫне халӗ те тӗпчесе ҫитереймен-ха, — тенӗ К. К. Петров. — Акӑ Ваҫҫа Аниҫҫи ятлӑ сӑвӑҫ пулнӑ, ун шӑпи те паллӑ мар.

— Ваҫҫа Аниҫҫи? Ара, вӑл ман тӑван аппа-ҫке! — тӗлӗнсех кӑшкӑрса янӑ Виктор Васильевич. — Ялта ӑна ҫапла чӗнетчӗҫ. Халӗ те пурӑнать вӑл.

— Ӑҫта?

— Мелекесре.

— Адресӗ пур-и?

— Пулмасӑр, пур.

К. К. Петровпа А. Лисков мана вара ҫапла тупнӑ. 1964 ҫ. К. Петров Мелекес хулине килсе кайрӗ. Иккӗмӗш хут эпӗ ӑна Шупашкарта тӗл пултӑм.

Эпӗ хам Мелекес хули ҫывӑхӗнчи ялсенче пурӑнса ӗмӗре ирттернӗ. Шупашкарта пӗлнӗ ҫын ҫуккипе ҫыру ҫӳретмен, унти хыпарсене пӗлмен. 1906—1907 ҫулсенче сӑвӑсем ҫырни ҫинчен хам тӑвансемсӗр пуҫне никампа та сӑмах хускатса калаҫман. Ҫавӑн чухне ҫапла ҫырнисене кӗнеке кӑларасси ҫинчен шухӑшламан. Тепӗр енчен, эпӗ «Хыпар» хаҫатӑн типографине салатнӑ чух жандармсем ун архивне веҫех пӗтернӗ пуль тесе шутланӑ.

К. К. Петров ман сӑвӑсемпе калавсене пухса Шупашкара кӗнеке издательствине янӑ, вара вӗсене Стихван Шавли редакцилесе кӑларнӑ. Кӗнекен ячӗ — «Ҫутӑ ҫӑлтӑр хӑпарчӗ». Халӑх телейлӗ пуласса ӑчаранах ӗненни, ӗмӗтленни маншӑн ҫутӑ ҫӑлтӑр пулчӗ. Халӗ вӑл чӑнах та ҫӳле хӑпарчӗ ӗнтӗ. Ӳлӗмрен те ҫав ҫутӑ ҫӑлтӑр ан сӳнтӗрччӗ. Вӑл ӗмӗр ялкӑшасса шанни мана ҫак ватлӑх кунӑмра та ӗҫлеме хал парать.

1969.



Матвей Чернов, Совет Союзӗн Геройӗ.

## «АТӐЛ КАЧЧИ»

### поэмӑран

...Вунӑ паттӑр сӑрт ҫинче,
Типӗ курӑк хушшинче,
Пӗлтерчӗҫ фронтрисене
Хӑйсем ӑҫта ҫитнине...

Пулнӑ унта пӗр чӑваш:
Ҫамрӑкскер, Чернов юлташ.
Сахал мар паттӑрлӑхне
Курнӑ юлташсем унне.

Вӑрҫнӑ вӑл Шурхулара,
Орелта та Смоленскра.
Вирӗ хутчен аманать,
Татах чаҫе таврӑнать.

...Вунӑ паттӑр сӑрт ҫинче —
Вутлӑ ҫумӑр айӗнче:
Хӑрамаҫҫӗ нимӗн те,
Вайсем тан мар пулин те.

Пуля ҫумӑр пек ҫӑвать,
Ҫурӑлаҫҫӗ минӑсем.
Чернов Матвей аманать,
Аманаҫ юлташӗсем.

Пит хытӑ ыратнипе
Унӑн ӑнӗ ҫухалать,
Аташать килтисемпе,
Е йынӑшать, е кулать.

Вӑхӑт-вӑхӑт куҫ уҫне
Амӑшӗ пырса тӑрать,
Е аслашшӗ ун патне
Туртмалли йатса пырать.

...Вилчӗ чаплӑ вилӗмпе
Чӑваш ачи вӑрҫӑра.
Тӑчӗ пӗтӗм вӑйӗпе
Вӑл тан мар ҫапӑҫура.

# 100 МАЛТАНХИ СĂВВĂМСЕМ

1906—1907 çулсенче Хусанта чăвашсен пирвайхи хаçачĕ «Хыпар» тухса тăратчĕ. Аттен юлташĕсем, кÿршĕ-аршăсем пирĕн патра хаçат вуланине итлеме пуханкалатчĕç. Ялти ачасене вĕрентекен С. С. Сорокин вуланине итлесе ларнă хыççăн вăрахчен каласса ларатчĕç. «Камăн мĕн ыратать — çавăн çинчен калаçать», — теççĕ вĕт. Чухăн çынсем хăйсен нушаллă пурнăçĕпе тарăхатчĕç. Пуçлăхсем пуянсене хÿтĕлени, чухăнсене пусмăрлани çинчен, улпутсем иртĕхсе пурăнни çинчен, куланай пухакансем хĕнени çинчен калаçатчĕç.

Эпĕ, 13—14 çулхи хĕрача, çитĕннисем хушшинче итлесе лараттăм. «Çук çынсем нумайăн, пуянсем сахал. Нумай сахала çĕнтермелле», — тесе шухăшлаттăм. «Çутă çăлтăр хăпарчĕ» кĕнеке çине тухнă сăвăсене нумайăшне эпĕ çав шухăш кăмăлпа çырнă. («Улпутсен пурнăçĕ», «Хура халăх ăранĕ», «Йыхрав», «Ан хăра, хура халăх»). Эпĕ ача пулнă. Шухăшласса та ачалла шухăшланă. Çĕнĕ пурнăç тăвасси ман шухăшпа пит çăмăл та пит кĕске вăхăтра пулмалла пек туйăннă. «Хыпар» хаçатăн юлашки редакторĕ В. Н. Иванов яла пыркалатчĕ. Пĕррехинче вăл мана: «Анисия, ты очень наивная», — терĕ. Вăл тĕрĕс каланă. Çĕнĕ пурнăç тăвасси пит çăмăлах пулмарĕ.

«Пăрлă çумăр» сăвва тырăсене пăр пĕтерсе кайнă чирки çырнăччĕ. Пăр пĕрчисем, кăвакарчăн çăмарти пек шултăраскерсем, пулса çитнĕ ыраша тяпкăпа тÿнĕ пек ватса кайрĕç. Нумайăшĕн чĕречисене çĕмĕрнĕччĕ. Ахаль те аран-аран тăранса пурăнакан ял çыннисемшĕн ку пит пысăк инкек пулнă.

«Вĕренме ямаççĕ» сăвва хамăртан инçе мар пурăнакан Марье ятлă хĕрачана ашшĕсем вĕренме яманшăн пăшăрханса çыртăм. Анат Тимĕрçенте шкул уçассăнах, малтанхи çулсенче арçын ачасем хушшинче пĕр эпĕ анчах хĕрача вĕренеттĕм. Манпа пĕр танлăрах хĕрачасем шкула каясшăн пулсан та, ашшĕ-амăшĕсем ямастчĕç. «Хĕрачана хут пĕлни кирлĕ япалах мар», — тесе калаçатчĕç.

«Тăлăх ача» сăвва 1907 çулта, хĕл варринче ыйткаласа çÿрекен тăлăх ача шăнса вилнĕ вăхăтра, çыртăм. Ун пек тăлăх туратсемшĕн вăл вăхăтра никам та тăрăшман. Хуласенче приютсем пулнă та, пур тăлăх та унта лекеймен.

«Çутă çăлтăр хăпарĕ-ха» сăвва «Хыпар» хаçата хупнă хыççăн çыртăм. Сăвăсенче пуринче пекех манăн халăха çутта кăларас ĕмĕт палăратчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл ĕмĕт пурнăçланчĕ.

«Камран пулăшу ыйтас?» сăвва эпĕ ырăслинчен куçарнă. Анчах вăл сăвва кам çырнине пĕлмен. Аттен хучĕсем хушшинчен тупса вуларăм та пит аван пек туйăнчĕ. Пуринчен ытла юлашки сăмахĕсем:

Обнял бы его я, да нельзя,  
Человек тот добрый — это я.

1906—1907 çулсенче çырнă сăвăсемпе калавсем паян кунччен пуçра кăна упранса юлма пултарнă. Тетрадьсем упранса юлайман. Ниçта куçса çÿремесĕр ялан пĕр ялта пурăннă пулсан, пĕр хускатмасăр арча тĕпĕнче выртнă пулсан та е кĕве, е шăшисем кăшласа янă пулĕччĕç. Тепĕр енчен, ун пек çырнă сăвăсене патша саманинче упрама та хăрушă пулнă. Пĕр вăхăтлăха кăна, 1905—1906 çулсенче, пичет енĕпе хăрушлăх сахалтарах пулчĕ. Унтан татах полицисем пырса ухтарасран хăраса пурăннă. Çав майпа 1906—1907 çулсенче çырнă сăвăсене çунтарса янă. Аттен вăрттăн кĕнекесем, прокламацисем, листовкăсем нумайччĕ. Пурне те вута пăрахса çунтарса ятăмăр.

Октябрь революцийĕ хыççăн хам ача чух çырнă сăвăсене аса илсе пĕр тетрадь çине çырнăччĕ. 1921 çул вăл тетраде ытти алçырăвĕсемпе (куçарнă пьесăсемпе) пĕрле Эврел ятлă яла шкул шкапне хурса хăвартăм. Хамăр выçлăхран тарса Çĕпĕре кайрăмăр. Хĕл каççан, татах çав шкула таврăнма шутланăччĕ. Эпир таврăннă çере шкул çуртне столовăй тунă. Шкапра пĕр хут татки те юлман. Каярахпа, Ямпак ĕçленĕ чухне, вырăсла юрăсене чăвашла куçаркаларăм, ача чухне çырнă сăвăсене те тепĕр хут аса илсе тетрадь çине çырса хутăм. Кĕнеке кăларас тесе шухăшламан эпĕ. Хам вилсен ачасем ĕлĕкхи пурнăç çинчен вуласа пăхчăр тесе çырнă. К. К. Петров вăл сăвăсене издательствăна ярасшăн пулчĕ. Эпĕ малтанах килĕшмерĕм. Çынсене култарни кăна пулĕ терĕм. Вăл сăвăсене çырнă чух эпĕ ача пулнă. «Ритм», «рифма» сăмахсем мĕне пĕлтернине те пĕлмен. Чĕмпĕр чăваш шкулĕн хатĕрленÿ класĕнче кăна вĕреннĕ вĕт. К. В. Иванов сăввисене вулакаланă, «Хыпар» çинчи сăвăсене вуланă, хăшне-хăшне пăхмасăр вĕреннĕ. Унтан хам та сăвă тĕрлеме шут тытнă.

1973.

# ЮЛАШКИ ÇУЛСЕНЧЕ ÇЫРНИСЕМ

## Анне

Нихăçан сÿнми, ĕмĕрлĕхех  
Юратупа тулать чĕре:  
Виличченех, виличченех  
Анне тени пĕрре, пĕрре!

Эс саваннă чух вăл савăнать,  
Инкек пулсан — пăшăрханать,  
Эс чирлĕ — вăл асапланать,  
Пĕрле йĕрет, пĕрле кулать.

Юлташусем сана мансан,  
Аннÿ манмасть хăй ачине.  
Ун ăшшине тивĕç пулсан,  
Тĕрен аннÿ кăкри çумне.

1968.

## Кĕркунне

Мăнтăр-мăнтăр пĕлĕтсем  
Хупăрлаççĕ тÿпене,  
Вĕтĕ çумăр пĕрчисем  
Йĕпетеççĕ çĕр питне.

Хĕрлĕ-сарă тумтирне  
Салхуп хываç йываççем.  
Вăрмансенче юррине  
Юрламаççĕ кайăксем.

Пушанаççĕ уй-хирсем,  
Типсе хăрчĕç курăксем,  
Уçăм кăна парăнмасть,  
Кĕр çитниччен хăрамасть.

1968.

## Шухăша путнă вăхăтра

Çамрăклăх, хаваслăхпа илем  
Ĕмĕр сакки хыçнех пытанчĕç.  
Тĕксĕмленчĕç ĕнтĕ куçăмсем,  
Пурçăн пек çÿçĕмсем шуралчĕç.

Яланхи пекех çĕр чăмăрне  
Хĕвелĕ ăшăтать, çутатать,  
Пĕлĕчĕ хупăрлать тÿпене,  
Кун çути хуралать, хуралать.

Йывăç çулçисене кĕрхи çил  
Çĕр çине вĕçе-вĕçĕн тăкать,  
Юлашки çулçине эс ан ил,  
Сивĕ çил, йывăçĕ хурланать.

Йывăç пек, этем савмасть кĕре  
Этем кĕрĕ ытла аван мар.  
Ак чарăне тапма та чĕре, —  
Унччен çавах пурнăçа савар.

Хĕвелĕ ир тухать, каç анать,  
Çумăрĕ шăварать çĕр питне.  
Куç хупăнсан тĕнче пытанать,  
Ĕмĕт тени юлать çамрăккине.

Çамрăклăх, хаваслăхпа илем  
Пĕр çын вилнипелех пĕтес çук, —  
Пĕр çыншăн кăна мар-çке вĕсем  
Этем йăхĕ нихçан пĕтес çук.

1969.

## 1921 çулхи выçлăх

Хĕртет хĕвел, хĕртет-пĕçерет,  
Хура тăпра вĕри çатма пек.  
Çил те пулин пите пĕçерет,  
Сулхăнра та пăчă — мунча пек.

Тÿпе тăра. Пĕлĕт курăнмасть,  
Сывлăм та çук, çумăр та çумасть.  
Типсе кайрĕç ешĕл курăксем,  
Хăрса пĕтрĕç шăтнă тырăсем.

Тиф чирĕпе хăрушă выçлăх  
Тапăнчĕçĕ иккĕш пĕр пулса,  
Аптăранă, хăранă халăх  
Ним тăваймасть, тарать вокзала.

Çĕпĕр енне кайма тухрăмăр,
Çитсе чарăнтăмăр вокзала.
Çынсем нумай, епле ларăпăр?
Каяс марччĕ киле каялла.

Пуйăс çитрĕ. Халăх хускалчĕ,
Кăшкăрашаç, вăрçаç, макăраç..
Темĕн пулнă пекех туйăнчĕ:
Чупаç çынсем, пĕр-пĕрне таптаç.

Ак пуйăс кăшкăртрĕ, хускалчĕ,
Вăйлăраххи ларчĕ те кайрĕ.
Вăйсăррисем ючĕç хурланса,
Вăрçаç пĕр-пĕринпе тарахса.

Пĕр хĕрарăм çамрăк ачипе
Йĕрсе чупать пуйăс хыçĕнчен.
— Чарăнас çук пуйăс чупнипе,
Ан йĕр, аппа, кĕт-ха ыранччен.

Лараç çынсем вокзал умĕнче
Пĕр кун çеç мар, хăшĕ эрнипе.
Чирлĕ çынсем вĕсен хушшинче
Ахлатса выртаç пÿрт çумĕнче.

Йĕрсе ярас килет кăшкăрса,
Пăхатăп эпĕ пĕр виле çине:
Ласкать ача, ласкать макăрса
Вилнĕ амăшийĕн кăкрине.
1969

* * *

Пытарчĕçĕ Хусанкая çĕр айне,
Тапта-тапта тирпейлерĕç тăприне,
Хĕрхенмерĕ вилĕм халăх поэтне,
Пултараймĕ вĕлерме унăн ятне.
15.III.70.

## Тинĕс

Тинĕс пăтранать,
Кĕрлет, ахăрать,
Амăртнă пек юхаççĕ хумсем.

Çилĕ шăхăрать,
Шыв шавлать, кашлать,
Хупланаç пĕтĕмпех хăлхасем.

Çиçĕмĕ çиçет,
Пĕлĕте çурать,
Тинĕс хумне каснăн туйăнать.

Хăш таран пĕлĕт,
Хăш таран тинĕс —
Пĕлме çук, пăтă пек пăтранать.

Тинĕсре пулман
Çын хуйхă курман,
Ку сăмаха калăх каламан.

Кĕрлесе тăрать,
Мĕкĕрет, улать,
Тĕнче пĕтнĕ пек туйăнать.
1970 ç. тĕлĕ

## Пир кĕпе те...

Пир кĕпе те, пурçăнни те, ытти те
Кивелеççĕ çĕтĕлеççĕ пурĕпĕр.
Тăларан, тиртен çĕленĕ тумтир те
Ăшăтаймĕ çурăмне ĕмĕр-ĕмĕр.

Кĕпе çеç мар, çын та ватăлать,
Çÿç шуралать, илем те таçта каять.
Мĕнле паттăр, пултаруллă пулсан та,
Икĕ ĕмĕр пурăнаймасть никам та.

Хĕвел тухать, хĕвел пытанать, анать.
Тепĕр кунне татах тухать, çутатать.
Вилĕм çави пĕр сулăнать, пĕр касать.
Вилни вилет, çуралакан çуралать.

Пурнăçпа вилĕм тавлашаç ялан, —
Çут тĕнчере пурнăç пĕтмĕ нихăçан.
1971.

## Чĕре

Этем ĕçлет-ĕçлет, ывăнать,
Ывăнсассăн выртать те канать.
Ĕçет, çиет — ăна вăй кĕрет,
Унтан татах ĕçре вăл çÿрет.

Этем чĕри нихçан та канмасть,
Пĕр самант та тапма чарăнмасть.
Утмăл, çитмĕл, сакăрвунă çул,
Тапать чĕре хăш чухне çĕр çул.

Ĕмĕр-ĕмĕр чĕре тапаймĕ,
Вĕри юн та ĕмĕр чупаймĕ,
Сывлăш тухмĕ, илтмĕç хăлхисем,
Ĕмĕрлĕхе хупăнĕç куçсем.
1971.

* * *

Ача чух эп нумай çырайман,
Патша йĕрки куçа уçтарман.
Ватлăхра тытăнтăм та çырма,
Кам савăнса вулĕ сăввăма?

Çуралнă эп кивĕ тĕнчере.
Халь поэзи çичĕ пĕлĕтре.
Çич пĕлĕте вĕçсе çитес çук,
Çунатсем аманнă — вăйăм çук.

Иртсе кайнă çамрăк кунсене
Каялла çавăрса килес çук.
Сÿнсе пыран чĕрен хÿхĕмне
Шăрпăк тивертнипе чĕртес çук.
1972.

## Тĕлпулу

Çуллахи тÿлек кун. Куранмасть
хирте чун.
Сар хĕвел çеç тăрать шăранса.
Колхоз уйĕ умра, вĕç-хĕрри те ун çук,
Тырă-пулă юхать хумханса.

Ял кĕрлет, ял шавлать — ун
патне хăнана
Килнĕ мар-и тăван ачисем?
Çунатсем сарăлса тĕрекленнĕ кăна —
Аякка сапаланнă вĕсем.

Çук, яман ял ятне Тимĕрçен ачисем:
Врач, учитель, профессор таран
Ÿссе çитрĕç вĕсем. Хăнана халь килсен,
Саламлать тăван ял аякран.

Çĕршыва тапăнсан сĕмсĕр урнă тăшман,
Вăрçă вучĕ хыпсан таврана,
Тимĕрçен ачисем вилĕмрен хăраман, —
Хирĕç тухнă чĕнмен хăнана.

Тимĕрçен ялĕсем пит начарччĕ авал,
Халĕ, ак, пăх та савăн кăна:
Каçсерен çăлтăрсем çуталаççĕ йăл-ял!
Вĕçене этем çутнă — сăна!
1974.

## Асаилÿ

Иртсе кайнă кунсем халь те ман асăмра..
Тикĕсех пулмарĕç кунçулсем.
Ачасем пÿрт тулли, тăвансем аякра
Хупăнчĕç машăрăн куçĕсем.

Çăмăлах пулмарĕ атьсене ÿстерме:
Çĕрпе кунне пĕлмен—ĕçленĕ.
Йывăртарах пулнă çи-пуса питĕрме,
Кив кĕрĕксем пăсса çĕленĕ.

Йĕнĕ те, кулнă та ачасемпе пĕрле,
Юлашки татăк та вĕсемшĕн.
Чирлесен куç хупман çĕрĕ-çĕрĕпеле, —
Амăшĕ пурăнать атьсемшĕн.

Ситĕнчĕç ачасем, ĕçлеме тытăнчĕç.
Пурăнатăп тенĕччĕ савăнса.
Икĕ ывăл харăс вăрçа тухса кайрĕç,
Эп юлтăм Гитлере ылханса.

Пĕри пусне хучĕ тăшманпа çапăçса,
Тепри ав таврăнчĕ аманса.
Ÿстертĕм атьсене, вĕрентрĕм тăрăшса,—
Сахал мар йĕнĕ пуль тăтăлса.

Пурăнăç халь аван: пурте пур мăй таран
Ирттересчĕ çапла ĕмĕре.
Ан килтĕрччĕ тăшман вăрçăпа урăхран,
Мир пултăрччĕ пĕтĕм тĕнчере.



«Çарăмсан» литература пĕрлешĕвĕнче.

# 100 МАЛТАНХИ ЧӖКЕҪ

## Пуҫламӑш утӑмсем

ВАҪҪА АНИҪҪИН «Ялта» сӑвви 1907 ҫулхи пуш уйӑхӗнче «Хыпар» хаҫатра кун ҫути курнӑ. Ҫакӑ вӑл чӑваш пичетӗнче малтанхи хӗрарӑм-сӑвӑҫ сасси янӑраса кайнине пӗлтернӗ Ваҫҫа Аниҫҫи 1904 ҫултанпах сӑвӑ хайлама пуҫланӑ. Чӗмпӗрте вӗренекен Трубина Марфи те ҫав ҫулсенчех чӑвашла сӑвӑсем ҫырма тытӑнать. Унӑн 1906—1908 ҫулсенчи сӑввисем упранса юлнӑ. Анчах вӑл совет тапхӑрӗнче тин пичетленме тытӑнать, тӗп вӑя прозӑпа ҫырас ӗҫе хурать. Ҫавӑнпа Ваҫҫа Аниҫҫине хамӑрӑн малтанхи поэтесса — тӑван ҫырулӑх поэзийӗн малтанхи чӗкеҫӗ теме тивет.

Выҫлӑха пула йыттӑн та вӗрме халӗ ҫук, шӑммисем ҫеҫ юлнӑ ача хырӑм выҫҫи кастарнипе пӳрне ӗмет, амӑшӗ унӑн чирлӗ иккен, ашшӗ тӗрмере асапланать, ялӗ ҫыннисем вилсе пӗтнӗ пек «пит лӑпкӑ»... Автор хӑй вӑхӑтӗнчи ял сӑн-сӑпатне чуна тивекен, куҫа курӑнакан санарсемпе ӳкерсе панӑ. Ялти ӗҫ ҫыннисен пурнӑҫӗ калама ҫук тертлӗ — акӑ мӗн пӗлтересшӗн сӑвӑҫ, акӑ мӗншӗн пӑшӑрханать вӑл, кунпа пӗрлех ҫак асапа тек тӳссе тӑма кирлӗ маррине те систересшӗн. Ҫапла тӳрех пысӑк ыйту хускатнӑ тин кӑна вунпиллӗке пуснӑ чӑваш хӗрачи.

М. Юрьев критик ҫакна асӑрханӑччӗ: асӑннӑ сӑвӑ хӑй сӑнарӗсемпе Г. Кореньковӑн икӗ уйӑх маларах «Хыпарта» тухнӑ «Хальхи пурнӑҫ» сӑввипе питӗ ҫывӑх. Эппин, Ваҫҫа Аниҫҫи ӑна темӑпа ӑсталӑх тӗслӗхӗ вырӑнне хума пултарнӑ. Тӑваньялсем Сергей сӑввисенче те ҫав санарсенех куратпӑр Апла вӗсен витӗмне те шута илмелле. Ку вӑл ҫав сӑнарсем пурнӑҫра тӑтӑш тӗл пулни ҫинчен те калать.

1907 ҫулта «Хыпарта» Ваҫҫа Аниҫҫин «Камран пулӑшу ыйтас?» сӑвви те тухнӑ иккен. Ана Г. Гейнен вырӑсла куҫарнӑ сӑввипе усӑ курса ҫырнӑ-мӗн. Вырӑсла текстран пӑрӑнма тӑрӑшманран-и, тен, ку сӑвӑ тӑпӑлккарах, якарах. Унта ҫынна никамран ытла хӑй кӑна пулӑшма пултарни ҫинчен каланӑ. Ку вӑл революци тапхӑрӗнче пусмӑрти халӑха кӗрешӳве чӗннипе пӗрех янӑранӑ.

Чӑвашсен малтанхи хаҫатне Ваҫҫа Аниҫҫи ытти сӑвӑсене те ярса панӑ-мӗн. Хальтерех тишкерсе пӑхнӑ тӑрӑх, вӗсем «Хура халӑх» ятпа пичетленнӗ теме май пур («Хыпар», 1907, 13, 15 №№).

«Хыпарта» тухнисемсӗр пуҫне Ваҫҫа Аниҫҫин пултарулахӗн малтанхи тапхӑрне ытти ӗҫсем те чыс кӳреҫҫӗ. 1904 ҫулта та, ун хыҫҫӑн Чӗмпӗрте вӗреннӗ чухне те вӑл темиҫе сӑвӑ ҫырса пӑхнӑ («Кӗлӗ», «Ҫуркунне», «Хӗр ачана вӗренме ямаҫҫӗ» т. ыт. те). Унта пейзаж ӳкернипех ҫырлахман, ача-пӑча пурнаҫӗнчи хуйха-суйха та хӑюллӑн палӑртнӑ: вӗренекенсене хӗнекен пупа сивленӗ, хӗрачасенчен чылайӑшӗн хут вӗренме тӳр килменнине пӗр тантӑшӗн шӑпи урлӑ сӑнласа панӑ.

Революциччен чӑвашсем йышлӑ вӗреннӗ хуласенче те алҫыру журналӗ кӑларасси анлӑ сарӑлман. 1906—1907 ҫулсенче Анат Тимӗрҫенте Тӑваньялсем Сергей пуҫарнипе «Хайхи» ятлӑ алҫыру журналӗ тухса тӑрать. Ку ӗҫе Ваҫҫа Аниҫҫи те хутшӑнать: материалсене ҫырса парать. журнала нумайлатнӑ хыҫҫӑн ҫамрӑксем хушшинче салатать.

## Сӑвӑҫ патӗнче

1974 ҪУЛХИ раштав уйӑхӗ. Хырлӑхри Димитровград. Ваҫҫа Аниҫҫи ун чухне больницӑраччӗ, хытах аптӑранӑччӗ. Палатӑра поэтесса хӗрӗ амӑшӗ патӗнчен уйралмасӑр ларатчӗ.

Сӑвӑҫӑн ҫӳҫӗ кӑвакарнӑ, пит-куҫӗ типшӗм, хӑй шурӑ катанпир тутӑр ҫыхнӑ. Эпӗ Шупашкартан килнине пӗлсен, ӑшталанса ӳкрӗ, хавасланчӗ.

— Пӗлтӗр те шӑнса чирлесеттӗм. Ку таранччен капла ураран пӗрре те ӳкменччӗ. Наяна тухрӑм, улпут пек пурӑнатӑп: ҫӑвартан хыптараҫҫӗ. Чирлесе пурӑнасси ӗҫрен те йывӑр. Ӗнер вилӗм кӗтрӗм — килмерӗ... — тет канӑҫсӑр Анисия Васильевна. — Киле каяс килет, килте кашни япалана хӑнӑхса ҫитнӗ, вӗсене тытса хыпашланипех кӑмӑл ҫӑмӑлланать. Халь уҫӑлса пыратӑп ӗнтӗ...

Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах. Пурнӑҫӗпе, ӗҫӗ-хӗлӗпе интересленнӗрен Аниҫҫа аппа ытларах поэзи ҫинчен каласрӗ, хӑй литература ӗҫне кӳлӗннине аса илчӗ.

— 1907 ҫулта Тӑваньялсем Сергее алӑпа ҫырса «Хайхи» журнал кӑларма пулӑшрӑм. Шкул тетрачӗ ҫине сӑвӑкалавсене шултӑран ҫыра-ҫыра параттӑм. Сергей Семенч ӑна ӑшӑх патнусри темӗнле шыва яратчӗ, ун ҫине шурӑ хут хуратчӗ те эп ҫырни темле майпа ун ҫине ҫапӑнса юлатчӗ. Ҫапла вара пӗрре ҫырни нумайланатчӗ. Журналӗсене, каҫхи вӑййа тухсан хамӑрӑн ҫывӑх юлташсене вӑрттӑн тыттарса яраттӑмӑр...

Сӑвӑҫ улттӑрах хут вулама вӗреннӗмӗн. Ашшӗ учитель пулнӑ. Вӗсен килӗнче ялти ҫынсем час-часах ушкӑнпа «Хыпар» хаҫата вуланӑ. Пӗррехинче яла Чӗмпӗртен пӗр вырӑс рабочийӗ пынӑ. Вӑл революци шухӑшлӑ литература вуласа панӑ. Аниҫҫа ашшӗ ҫавна чӑвашла куҫарса ӑнлантарнӑ. Ҫав каласӑва итленӗ хыҫҫӑнах чӑваш хӗрӗ «Кам наян, кам ӗҫчен» сӑвӑ ҫырать, унта пусмӑрҫӑсен сӑн-сӑпатне ӳкерсе парать. Пӗррехинче тата ашшӗ кӗнекисем хушшинче «патшапа мужик» ҫинчен ҫырнӑ сатирӑллӑ сӑвӑ сыпӑкне тупнӑ.

— Сӑвӑсене вуланипех ҫырлахас килместчӗ, ман вӗсене пӑхмасӑр калама хӑнӑхас килетчӗ, — тет поэтесса. — Куна та ҫапла вӗреннӗччӗ, — тет те сылтӑм аллипе ҫирӗппӗн сулкаласа вуласа парать. Акӑ унӑн пӗр пайӗ:

**Коль в селе дурак родится,**
**Он на что-нибудь годится, —**
**Даром хлеб не станет есть,**
**Смотришь, годен лапти плесть.**
**И в свинины пастухи.**
**Но с царем дела плохи,**
**Много выйдет чепухи.**
**И при чине при таком**
**Нужно чинно и с умом**
**Все дела по царству взвесить:**
**Тут сослать, а там повесить...**

Вырӑссен пӗрремӗш революцийӗн ҫулӗсенче сӑвӑҫ чӑваш поэчӗсенчен Тайӑр Тимккипе Николай Шелепие хавхаланса вуланӑ-мӗн, ун чухнех Тарас Кирилловӑн «Тырӑ пулнӑ ҫул», Турхан Яккӑвӗн «Варуҫҫи» поэмисене пӑхмасӑр калама вӗреннӗ. Хӑйне йывӑр пулин те, вӑл халӗ никам ыйтмасӑрах, Т. Кириллов поэмин пысӑк пайне каласа пачӗ. Самантлӑха чарӑнса илет, хӑрах аллипе куҫне хупать те аса илсе малалла калать. Сӑмах май Аниҫҫа аппа хӑйӗн ҫамрӑк чухнехи тата юлашки сӑввисене те чылай каласа пачӗ. Упӑшки вилсен, вӑл вырӑсла сӑвӑ ҫырнӑ, ана та аса илчӗ.

— Ӗлӗкхи пек ҫыратӑп та, килӗшсех те пӗтмест пуль. Сӑвӑ ҫырма кӗнекерен вӗренеймерӗм, халӑх юррисенчен хӑнӑхрӑм. Чун тӳсеймест — хӑш чух ҫӗр варринчех тӑрса пуҫа килнӗ сӑвӑсене хут ҫине ҫыра-ҫыра хуратӑп, кайран юсатӑп, тӑвансемпе юлташсене вуласа кӑтартатӑп, вӗсем каланисене шута илсе якататӑп. Ҫынсене сӑввӑмсем мӗн чухлӗ те пулин кирлӗ пулӗҫ тетӗпҫке... — тет Анисия Васильевна.

Пӗлтӗр хам нумай ҫул ӗҫленӗ ялта пултӑм, Совет Союзӗн Геройӗ Матвей Чорнов чӑваш ҫинчен калакан «Атӑл каччи» поэмӑна вуласа патӑм. Халӑх йӗрет. Хӑйсен вилнӗ тӑванӗсене те аса илчӗҫ пуль...

«Камран пулӑшу ыйтас?» сӑвва епле ҫырни пирки интересленетӗп.

— Пирӗн килте вырӑсла численник пурччӗ, унта ҫав сӑвӑ пичетленнӗччӗ. Мана вӑл питӗ килӗшрӗ, вара манӑн ӑна чӑвашла каласа парас килчӗ. Чӑвашла ҫыртӑм ӑна хайхи, — тет Аниҫҫа аппа. Унтах ҫапла хушса хурать:

— Мӗншӗн-ха пирӗн хӗрарӑмсем никамах та ҫырмаҫҫӗ?

— Ӗлӗк, чӑнах, сахал пулнӑ, май килмен. Халь хӗрарӑм-ҫыравҫӑсен йышӗ пирӗн те ӳссех, хастарлансах пырать, —лӑплантарма тӑрӑшатӑп эпӗ, кам-кам ҫырнине пӗлтеретӗп.

Ватӑ сӑвӑҫ мана ҫавӑн пекех хӑй ҫамрӑк чухне «Севастопольская революционерка» ятлӑ кӗнекене питӗ хавхаланса вулани ҫинчен, Тӑваньялсем Сергей Хусана «Хыпар» хаҫат редакцине хресчен пек тумланса вӑрттӑн ҫитсе килни ҫинчен каласа кӑтартрӗ. Ҫак тӗлпулу маншӑн манӑҫми самант пулса юлчӗ. Ваҫҫа Аниҫҫин поэзи туйӑмӗ ватлӑхра та сӗвӗрӗлменни, вӑл хӑй тахҫанах ҫырнӑ тата вӗреннӗ пайтах сӑвва астуса тӑни тӗлӗнтерчӗ,



## *Ваҫҫа Аниҫҫи*

### Ялта

Ялта лăпкă, пит лăпкă...
Вытăсем те вĕрмеҫҫĕ.
Вĕсем начар, вĕсем типшĕм,
Вĕрме х(ă)ватсем ҫитмеҫҫĕ.
Пĕр тĕттĕм, начар пӳртре
Ача макăрни илтĕнет...
Вăл начар, шурса кайнă,
Шăммисем кăна юлнă.
Амăшĕ унăн чирлĕ,
Вырăн ҫинчен тăраймасть,
Ашшĕ унăн тĕрмере
Ҫут-ирĕке тухаймасть.
Ачасем макăраҫҫĕ.
Вĕсем ҫиме ыйтаҫҫĕ.
Ним тăвайман майĕпе
Пӳрнисене ĕмеҫҫĕ...

1907

### Камран пулăшу ыйтас?

(Г. Гейнерен)

Ҫынсем нумай сăмах пачĕҫ:
«Пулăшăпăр-халь!» — терĕҫ...
Анчах пулăшасса кĕтсе
Чутах вилеттĕм выҫса.

Пĕр ҫын пулман пулсассăн,
Выҫсах вилнĕ пулăттăм.
Вăл мана тумлантарчĕ,
Вăлах мана т(ă)рантарчĕ.

Ыталăттăм, чуп тăвăттăм,
Ҫак ыр чуна тав тăвăттăм.
Ним тума та ҫук анчах:
Ҫак ырă чун эп хамах...

1907

### Хĕрачана вĕренме ямаҫҫĕ

Кĕрхи кунсем ҫитрĕҫĕ,
Ҫĕрсем вăрăмланчĕҫĕ,
Ҫулҫăсем те саралчĕҫ,
Хирсем те пушанчĕҫĕ.

Марье ятлă хĕрача
Сăпка сиктерсе ларать.
Хăйĕн ҫинҫе сассипе
Ерипен юрă юрлать:

«У-у-у-у уть ачи,
Печĕкҫеҫҫĕ чĕч ачи.
Уртăш йывăҫ пĕкечи,
Улма йывăҫ сиктĕрми,
Йĕтĕн пирĕ ҫивитти...»

Чӳрече витĕр пăхать,
Ачсем иртнине курать.
Вĕсем шкула каяҫҫĕ,
Вĕренмешкĕн васкаҫҫĕ.

— Атте, эп те каям-и,
Ҫырăва вĕренем-и? —
Терĕ Марье ашшĕне,
Урамалла кăтартса.

— Шкула?! Сиктер сăпкуна!
Санăн вăхăт ҫук унта
Кунĕпе лапсăртатма.
Ачана кам пăхмалла? —

Терĕ ашшĕ ҫилленсе,
Хаяр сасăпа кăшкăрса. —
Кĕнчеле авăрлама
Авантарах вĕрен-ха.

Аннӳ пир тĕртнĕ чухне
Ҫĕрĕ туса памалла,
Путексем астумалла.
Эпĕр хут пĕлмесĕрех
Ĕмĕрсене ирттернĕ.

Ӳсее ҫитсен, качча кайсан,
Турчăкапа ухвата
Ҫыру вĕренмесĕрех
Тыткалама пĕлĕн-ха! —
Терĕ ашшĕ Марьене.

Ҫапла вара ачана
Вĕренме ямарĕҫĕ,
Пĕчĕк ача ĕмĕтне
Пысăккисем татрĕҫĕ.

1906

### Ҫутă ҫăлтăр хăпарĕ-ха

[«Хыпар» хаҫата хупнăшăн хурланса]

Тĕттĕм ҫĕрле пĕлĕт ҫине
Ҫутă ҫăлтăр хăпарчĕ.
Мăч-мăч туса, хăй ҫутине
Тĕттĕм ҫĕр ҫине ячĕ.

Тĕттĕмлĕхре асапланса
Пурăнакан чăвашсем
Ҫăлтăр ҫутине курса
Хĕпĕртерĕҫ, мĕскĕнсем.

Ҫăлтăр вăрах ҫутатмарĕ,
Вăхăтсăр сӳнсе ларчĕ.
Чăваш ҫутта тухмарĕ.
Тĕттĕмре пек туйăнчĕ.

Куҫ хупмасăр пĕлĕт ҫине
Ҫынсем пăхса тăраҫҫĕ,
Ҫутă ҫăлтăр хăпарасса
Вĕсем тем пек кĕтеҫҫĕ.

Ҫăлтăр татах хăпарĕ-ха,
Сӳнмĕ ҫутă хунарĕ.
Кăлтăртатса хĕвел тухĕ,
Тĕттĕмлĕхрен хăтарĕ.

Сарă хĕвел чăвашшăн та
Ашшăн пăхĕ сарăлса.
Ҫутта тухнă хура халăх
Пурнăҫ тăвĕ савăнса!

1907, ҫĕртме